Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

59 (7376) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи июлĕн (утă) 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Симĕс ĕç çи**

## Малашлăха пăхса ĕçлемелле



Çак шухăша тĕпе хурса ĕçлеççĕ “Свобода” хуçалăх ĕçченĕсем. Кунта вырăнти апачĕ çителĕклĕ те пахалăхлă пултăр тесе иртен пуçласа каçчен хирте тăрăшаççĕ. Паллă ĕнтĕ, çуллахи вăхăтпа ăнăçлă усă курса продукци ытларах илме тимлемелле. Çакна валли майсем туса парас, çăлăнăç çулĕ тупас тесе тимлет К.Е. Сретинский ертӳçĕ.

“Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç отраслĕ ял хуçалăх производствинче тĕп вырăнта тăрать. Ăна ăнăçлă аталантарни хуçалăх экономикипе тӳрремĕнех çыхăннă. Çавна шута илсе вăхăта сая ямасăр хĕле хатĕрленетпĕр. Агрегатсене çĕнетесси пирки те шутлатпăр. Техникăна улăштарса çĕнетме паянхи кун питĕ йывăр, хакĕсем кунран-кун ӳссе пыраççĕ. Тырă вырас вăхăт та çитет, çавна валли “Дон-1500” комбайн илсе килмелле. Унсăр пуçне МТЗ-1221 тата çĕр хатĕрлемелли тепĕр агрегат çак кунсенчех кӳрсе килесшĕн», - пĕлтерчĕ хуçалăх ертӳçи.

Кунта нумай çул ӳсекен курăксене 450 гектар çинчен çулса пуçтарма палăртнă, паянхи куна ăна 100 процент çулнă. Пĕр çул ӳсекен курăксене 55 гектар çинчен (38 процент) пуçтарса илнĕ. Курăксене типĕтсе утă 402 тонна хатĕрленĕ е 36 процент, сенаж хывасси 58 процентпа танлашать.

А. Соловьев тракторпа нумай çул ӳсекен курăксене çулать, А. Пугачев автомашинăпа ăна сенаж валли турттарать. Вĕсем ку ĕçре тăрăшулăхпа палăраççĕ, коллективра та хисепре.

– Ӳснĕ курăка вăхăтра çулса пуçтарассишĕн тăрăшатпăр. Çанталăк панă кунпа туллин усă курас тетпĕр. Хĕл хырăмĕ вăрăм теççĕ, çавна тĕпе хурса ĕçлетпĕр эпир,- пĕлтерчĕç тăрăшуллă ĕçченсем.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: А. Соловьев механизатор тата А. Пугачев водитель.**

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ИЮЛĔН 18-МĔШĔ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Колонкăсенче: 1. Нумай çул ӳсекен курăксем çулнă. 2. Утă хатĕрленĕ. 3. Сенаж хывнă. 4. Силос хывнă (процентпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 95 | 79 | 65 | |
| “Волга” | 96 | 78 | 0 | |
| “Восток” | 100 | 140 | | 71 |
| “Герой” | 82 | 44 | 83 | 95 |
| ЗАО «Агро-Урожай» | 100 | 100 | | |
| К. Иванов яч. хис. | 91 | 34 | 60 | 55 |
| Ильич яч. хис. | 94 | 69 | 123 | 89 |
| “Колос” | 71 | | | |
| Ленин яч. хис. | 93 | 90 | 300 | 0 |
| “Лидер” | 87 | 40 | 50 | 0 |
| ГУП ЧР «ПФ «Моргаушская» | 193 | | | |
| “Нива” | 87 | 50 | 0 | |
| “Оринино” | 91 | 85 | 165 | 87 |
| “Передовик” | 33 | 24 | 42 | |
| “Свобода” | 100 | 42 | 58 | |
| “Сеятель” | 56 | 58 | 0 | |
| Суворов яч. хис. | 92 | 58 | 42 | |
| ООО АФ «Рассвет» | 74 | 38 | | 53 |
| ОАО АФ «Нива» | 71 | | | |
| “Ударник” | 100 | 36 | 93 | 0 |
| “Хлебороб” | 56 | 40 | 0 | |
| Чапаев яч. хис. | 80 | 73 | | 0 |
| “Чемеево” | 100 | 77 | | 59 |
| Чкалов яч. хис. | 94 | 96 | 0 | 67 |
| КФХ Михайлов А.Н. | 82 | 90 | 0 | |
| **РАЙОНĔПЕ** | **83** | **56** | **59** | **49** |

**Кĕскен**

## Кадр енĕпе ĕçлекен специалистсем пухăнаççĕ

Паян Ильич яч. хис. хуçалăхра кадрсем енĕпе ĕçлекен специалистсем пухăнаççĕ. Кунта хуçалăхсенчи çак специалистсен вĕренӳллĕ семинар-канашлăвĕ иртет. Кунта пăхса тухма палăртнă ыйтусен анлăшĕ пĕчĕк мар: кусем вĕсем пĕтĕмĕшле ĕçсене епле йĕркелесе пырасси те, должноçри инструкцисемпе пăхса хунă ĕçсене пурнăçласа пырасси те, рабочи профессийĕсен должноçри инструкцийĕсем те т. ыт. те. Апла пулсан çак семинар-канашлăва пыма тивĕçлисен унăн ĕçне хутшăнни ытлашши пулас çук.

Семинар-канашлу 10 сехетре пуçланать.

## Отчетпа суйлав конференцийĕ

Июлĕн 20-мĕшĕнче Ярославкăра хĕрарăмсен канашĕн районти отчетпа суйлав конференцийĕ иртет. Унта хутшăнакансем малтанах пĕтĕмĕшле практика врачĕн Нискассинчи уйрăмĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашаççĕ, Нискасси шкулĕнчи сиплевлĕ медицина кабинетĕнче пулаççĕ, Ярославка ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕ йĕркеленĕ халăх пултарулăх ĕçĕсен выставкине çитсе кураççĕ.

Отчетпа сулав конференцийĕнче сӳтсе явма палăртнă ыйтусем çаксем:

– хĕрарăмсен районти канашĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки;

– хĕрарăмсен районти канашĕн членĕсене çĕнĕрен суйласси;

– хĕрарăмсен республикăри XXIV съездне делегатсем суйласси.

## Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен канашлăвĕ

Июлĕн 21-мĕшĕнче «Восток» хуçалăхра районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансен канашлăвĕ иртет. Канашлăва пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ертӳçисене, зооветеринари специалисчĕсене, ферма ĕçченĕсене чĕннĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансемпе специалистсем пĕрле пухăнса иртнĕ çулхи хĕл итогĕсене, çав вăхăтра епле ĕçлесе пынине тишкерсе хак парĕç, çитменлĕхсемпе лайăх енсене палăртĕç. Кунпа пĕрлех хальхи вăхăтра выльăхсенчен май пур таран ытларах продукци илес тĕлĕшпе кая хăвармасăр туса иртермелли ĕçсем, аш-какай, сĕт туса илме каякан тăкаксене чакармалли майсем пирки те анлă калаçу пулĕ. Ку енĕпе вара хальлĕхе татса памалли ыйтусем çук мар-ха.

**Хамăр инф.**

**Çамрăк çемьесем валли**

## Çурт-йĕр ыйтăвне татса пама

Патшалăх паян çамрăк çемьесене пурнăç условийĕсем туса парассипе тимлет. Асилтеретĕп, “Чăваш Республикинчи çамрăк çемье” программăпа килĕшӳллĕн иртнĕ çул пирĕн районти 43 çамрăк çемье кредит илчĕ.

Нумаях пулмасть вара Раççей Федерацийĕн Перекет банкĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕпе ЧР Хула строительствин тата обществăлла инфраструктурине аталантарассин министерстви кăçал çамрăк çемьесене “ЧР Çамрăк çемье” программа условийĕсемпе килĕшӳллĕн процент ставкисене республика бюджетĕнчен субсидилесси пирки калакан килĕшӳ çине алă пуснă.

«ЧР Çамрăк çемье» программăпа килĕшӳллĕн кредита нумай вăхăтлăх параççĕ: 20 çултан иртнĕ тапхăра валли. Кредита 13 процентпа параççĕ. 3 çынран тăракан е тата ытларах йышлă çемьене кашни членĕ пуçне 18 тăваткал метр, 2 çынран тăракан çемьене – 42 тăваткал метр, законодательствăпа килĕшӳллĕн инвалида тивĕçекен хушма лаптăка – инвалид пуçне 1 пӳлĕм чухлĕ 18 тăваткал метр чухлĕ çурт-йĕр туянма е тума укçан усă курнă кредитпа усă курнăшăн тӳлемелли процентсене ЧР бюджетĕнчен саплаштараççĕ.

Ача пур çамрăк çемьесем çак программăпа кредит илнĕ чух çăмăллăхпа усă кураççĕ. Малтанхи 3 çулĕнче кредитшăн тӳлемелли проценчĕсене 5 процент таран чакараççĕ. Енчен те заемщик процент ставкин пайне хăйĕн укçинчен тӳлет пулсан тата кредит килĕшĕвĕнче кăтартакан вăхăтри графикпа килĕшӳллĕн кредит суммине татса пырать пулсан, ытти çулĕсенче кредитпа усă курнăшăн тӳлекен процентсене 10 процент чакараççĕ.

Енчен те çемьере 3 е ытларах ача пулсан, е пĕр çемье членĕ инвалид пулсан, çавăн пекех ялта пурăнакан çемьесене, пĕр çемье членĕ аслă пĕлӳ илнĕ çамрăк специалист пулсан: енчен те саккунпа килĕшӳллĕн 5 çултан час мар тапхăра ĕç килĕшĕвĕ тунă пулсан, процент ставкине пĕтĕмпех республика бюджетĕнчен саплаштараççĕ. Ку çăмăллăх тивĕçтĕр тесен процент суммине кредит килĕшĕвĕнче палăртнă программăпа килĕшӳллĕн вăхăтра тӳлесе пымалла.

Çавăн пекех 2002-2010 çулсенче çамрăк çемьесене çурт-йĕр ыйтăвĕсене татса пама пулăшакан патшалăх программипе килĕшӳллĕн е çамрăк çемьесене çурт-йĕр тума е туянма патшалăх 30 процент таран субсиди парса пулăшать.

**Президент гранчĕ**

## Калайкасси шкулĕ – лайăххисен шутĕнче

**Утă уйăхĕн 10-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров хушу çине алă пуснă, унпа килĕшӳллĕн республикăри муниципалитетсен 20 вĕрентӳ учреждениине кашни çул 200 пин тенкĕлĕх грант парĕç.**

**Президент грантне Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр, Канаш, Сĕнтĕрвăрри хулисем, Етĕрне, Вăрнар, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Йĕпреç, Элĕк, Куславкка, Канаш, Вăрмар районĕсемпе пĕрлех Муркаш районĕ те тивĕçнĕ. Çавна май эпир район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхне Л.И. МОЧАЛОВА ку енĕпе тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăмăр.**

– Çакнашкал грантсене рспублика пуçлăхĕ иртнĕ çулхи юпа уйăхĕнче «Чăваш Республикинче вĕрентӳ тытăмĕнче инноваци, пултарулăхпа ăс-хакăл пуянлăхне аталантармалли тата пулăшмалли хушма мерăсем çинчен» Указа алă пуснă хыççăн пĕрремĕш хут пама палăртнă. Çакă ачасене воспитани парас, инноваци ĕç-хĕлне тата пултарулăх пуçарăвне аталантарас тĕлĕшпе республика ертӳçисен политикине пурнăçлас енĕпе палăрăмлă тепĕр утăм пулать.

200 пин тенкĕлĕх гранта тивĕçнисем хушшинче пирĕн районти Калайкасси шкулĕ те пур. Мĕн тĕллевпе усă курма пулĕ-ха ку укçапа? Чи малтанах оборудовани туянма, вĕрентӳ ĕçченĕсен квалификацине ӳстерме, вĕренӳ пособийĕсем туянма т. ыт. те. Апла пулсан вĕренекенсене тулли те тарăнрах пĕлӳ пама майсем ытларах пулĕç.

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*



Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци пуçлăхне **Николай Семенович ЯКОВЛЕВА** 50 çул тултарнă ятпа коллектив ăшшăн саламлать.

Николай Семенович хăйĕн ĕçне ăста пĕлекен специалист. Ветеринари ĕçĕнче вăл районта 19 çул вăй хурать. Çав шутран 8-мĕш çул выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станцие ертсе пырать. Хăйĕн ăсталăхĕпе пĕлĕвне çамрăк специалистсене парассинчен айккинче тăмасть. Кунпа пĕрлех вăл пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçисене, ветеринарипе зоотехника специалисчĕсене малта пыракан опыта алла илме, çĕнĕ технологисене çул уçма, наука вĕрентĕвĕсене пама тăтăшах пулăшать. Хăйĕн ĕçне чунĕпе парăннăскер, коллективра яланах тулли энергипе палăрса тăрать. Çавăнпа пĕрлех ĕçлекенсенчен те çирĕп ыйтать. Ĕç юратăвĕ вĕсене, мăшăрĕпе Ирина Николаевнăпа иккĕшне, виçĕ ача çуратса пурнăç çулĕ çине кăларма пулăшрĕ. Çакна шута илсе яланах кăмăллă Николай Семеновича эпир татах нумай çул пирĕнпе юнашар пурăнма ырлăх-сывлăх, ăнăçу, телей те юрату сунатпăр. Эсир пурри пире шанчăкпа савăнăç кӳрет.

**Салампа выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци коллективĕ.**

**Уважаемые дамы и господа!**

Не секрет, что надежная и доступная связь в немалой степени определяет успех практически любого дела.

Одним из главных направлений в работе нашей компании является сотрудничество с корпоративными клиентами.

Сегодня наша компания разрабатывает и внедряет услуги и тарифы для корпоративных клиентов с привлекательными ценовыми критериями. Предложения от компании СМАРТС для юридических лиц являются наиболее экономными среди всех предложений на конкурентном рынке. При этом являются определяющими не только ценовые критерии, большое внимание уделяется техническому оснащению сети, зоне покрытия, качеству связи, дополнительным услугам.

Развитие сотрудничества с юридическими лицами привело к появлению нового вида услуги - корпоративного обслуживания, которое позволяет без увеличения затрат обеспечить организацию современной и удобной корпоративной связью и максимально использовать ее преимущества.

Наши специалисты готовы совместно с Вами рассмотреть различные варианты использования корпоративной связи, провести анализ потребности в услугах связи по предприятию в целом, его подразделениям и отдельным сотрудникам, а также осуществить необходимые расчеты для выбора оптимального тарифного плана.

Компания СМАРТС представляет Вашему вниманию новый корпоративный тарифный план «Формула Успеха» с описанием всех возможных дополнительных услуг и опций, которые позволят Вашему предприятию сократить расходы на сотовую связь.

С уважением и надеждой на долгосрочное и взаимовыгодное сотрудничество генеральный директор К.Я. Волков.

СМАРТС

Лицензия №9156 ГК РФ по связи и информатизации

**Августран илсе тăма çырăнтараççĕ**

**Хаклă вулакансем! Эсир ку е вăл сăлтавпа районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата кăçалхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма вăхăтра çырăнма ĕлкĕреймен пулсан, тӳрех шикленсе ӳкме ан васкăр. Ăна августран илсе тăма çырăнма та пулать. Апла пулсан почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсене çитме е почтальонсемпе тĕл пулма васкăр. Малашне те пĕрлех пулар.**

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ.**